## Чăваш тĕнчи тĕрĕллĕ

Халăхăмăрăн çĕр пин тĕрри пирки калакан сăмах ахальтен тухман-тăр. Чăваш хĕрĕ мĕн пĕчĕкрен тĕрĕ тĕрлесе ăсталăхне ӳстернĕ, ӳнер пултарулăхне аталантарнă. Тĕррине кура çыннине хакланă. Тĕрлесси – хĕр-упраçшăн ал ĕç е йăпанăç çеç мар, ăшри туйăмсене палăртмалли мел те. Ас тăватăр-и:

Тĕррĕн пур-çке авалтан,
Тахçанхи,
Ăсти çеç ăнланакан
Хăй чĕлхи...
Мĕн калать тĕрĕпеле
Натали?

Чăвашăн çи-пуçĕ тĕрĕллĕ, савăт-сапи ерешлĕ пулнă. Çавăнпа-ши вăл пĕтĕм тĕнчене тĕрĕллĕ курнă. Пит çине те ун «хура тут» е «чĕкеç шатри» çеç мар, *кук тĕрри, куккук тĕрри, чĕкеç тĕрри* тухнă, пит çинчех тепĕр чух *кулă тĕрри* вылянӑ.

Тĕрĕ – пирĕн пурнăç. Пирĕн пурнăç – тĕрĕ. Эпир ĕмĕр тăршшĕпех хамăр тĕрре тĕрлетпĕр. Кашнин – хăйне кура: пĕрин – çыпăçуллă та ĕлккен, теприн – капашсăр та элес-мелес. Тĕрĕ виçи те пирĕн тĕрлĕрен... Петĕр Хусанкай хăйĕн пурнăç тĕррине çапла курнă:

Умра тĕрленчĕ кунăм-çулăм,
Тĕрри ула-чăла, чăпар.

Сăмах ăстисен хайлавĕсене вулатăн та чăваш тĕнчи мĕн тери эрешлĕ пулнине тата туллинрех куратăн. Сар хĕвел çут тĕрĕ тĕрлеме пултарнине кам кăна сăнаман пуль: Ивник, Тукташ, Уйăп Мишши, Шавли... Хĕвелĕн чăвашла ăсталăхне Кĕçтенттин Иванов пуринчен те маларах палăртнă:

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе.
Хĕвел тĕрĕ тĕрлесе
Вылять унăн шывĕпе.

Сар хĕвел çеç мар, асамат кĕперĕ те, ăшă çил те, хĕл сивви те – чăваш шучĕпе – тĕрре маçтăр:

Карчĕ асамат кĕперĕ
Çичĕ тĕслĕ тĕррине... /Г.Юмарт/
«Шурă хăйăр çинче шыв темле эрешлĕ тĕрĕсем тĕрлет» /К.Турхан/
Хĕл сивви тĕрленĕ тĕрĕ
Чӳрече çинче çиçет... /Г.Чаржов/

Халăх сăмахлăхĕнче те тĕрĕ сăнарĕ кăвак хупи пек уçăлса илет. «Сурпанне кура –тĕрри» текен каларăш, «Çинçе пилĕк сарă хĕр тĕттĕм çĕрте

тĕрĕ тăвать» тупмалли юмах аса килет. Йышпа пухăнать те йăхташ – тарăн шухăшлă та ансат юррине тăсса ярать:

Илемлĕ чăваш тĕрри –

Тĕрлеме пĕлсен кăна...

Эсир асăрханă-и – килĕшӳлĕхпе илĕртекен, чуна тыткăнлакан япалана чăваш çынни тĕрĕпе танлаштарать:

«Эсĕ, тăван чĕлхе, чăваш тĕрри пек паха та асамлă та ытарлă». /А.Артемьев/

«Анăçри улăх – чăваш хĕрĕсен тĕрри пек – хĕрлĕпе те тĕксĕм кăвакпа çиçсе выртатчĕ»./А.Талвир/

Çакă ахальтен мар. Чăвашăн тĕрĕ ăсталăхĕ темиçе çĕр çуллăх витĕр тухнă, ламран лама аталанса пырса урăм-сурăмлă XX ĕмĕре кĕнĕ. Пĕр тапхăр тĕнче пăтраннă, пăлхавăр çĕкленнĕ, самана улшăннă – чăвашăн ăрăмлă тĕрри те «кивĕ тĕнче юлашки» пулса юлма пултарнă. Çапах та пурнăç-пăрнăç екки урăхла килнĕ: тĕрĕ ăсталăхĕ хăрушă выçлăхран хăтăлма, çĕнĕ пурнăçа ӳсĕнтерме кирлĕ пулса тухнă. Ĕмĕрхи асамлă эрешсем çи-пуç çинчен кил-тĕрĕш пусми çине куçнă. Ятарласа йĕркеленĕ артельсем тĕрĕллĕ ейме, сĕлкĕ, çивитти, карă, чаршав, минтер пичĕ кăларма пуçланă. Вĕсем сутлăх тавар пулса ют патшалăхсене пинĕ-пинĕпе ăсаннă – тыр-пул, апат-çимĕç, техника хатĕрĕ пулса каялла таврăннă...

Н.В.Никольский фондĕнче упранакан ал çырусен хушшинче халăх сăмахлăхĕн пĕр тĕслĕхĕ вырăн тупнă /329 т., 390 с./, унта çакăн пек йĕркесем пур:

Пир-авăра тăвакан,

Тĕрĕ-çĕвĕ пĕлекен

Кĕтерине çитес хĕр

Пирĕн ялта пулман та.

Кĕтерин пек тĕрĕ-çĕвĕ ăсти ялта çеç мар, çĕршывра та, тĕнчере те пулман-тăр. Кăна эпир Екатерина Иосифовна Ефремова пирки калатпăр. Вышкайсăр пултаруллă та тĕлĕнмелле ăста çак хĕрарăм чăваш тĕррине çĕнĕ пурнăç парнеленĕ, ăна тĕнче умне мĕн пур илемĕпе кăларнă. Чăваш тĕррин селĕмлĕ ĕлккенлĕхĕпе алчăрса кайнă тĕнче пирĕн тĕрĕ-ереше «Авалхи Египет пирамиди пек кĕтрет» тенĕ, вĕсене Чĕрĕлӳ тапхăрĕнчи ӳнер ăстисен картинисемпе, Вавилонти Семирамида пахчисемпе танлаштарнă.

Тĕрĕ тумалли меслет-ăслайпа çĕвĕ мелĕ нихăш халăхăн та чăвашăнни пек пуян пулман: çĕвĕ тĕсĕсен йышĕ – вăтăра яхăн, тĕс сĕмĕсем – тата ытларах. Екатерина Иосифовна халăх еткерне куллен-кун тишкернĕ, ватă тĕрĕсене самана ыйтнă пек çĕнетнĕ, эрешсене капашлă уçăмлăх кĕртнĕ.

Акӑ ют ҫӗршыври курав тӗлне хатӗрленӗ пысӑк чаршав: йӗппе-ҫиппе тӗрленӗ тӗрӗ тавра хӗрлӗ-симӗс хӑю ҫаврӑнать. Ҫакӑ хӑнӑхнӑ эреше усӑлтарса ярать, вӑл чылай пуянрах курӑнать. Сумлӑ ҫав чаршав ҫине куҫ илмесӗр пӑхатӑн – ӳнерҫӗн композици тӑвас пултарулӑхӗшӗн савӑнса тӗлӗнетӗн. Алексей Аттилӑн тахҫан илтнӗ йӗркисем ӑша сӑрхӑнса кӗреҫҫӗ: «Ирӗкленетӗп эп те чӗлтӗр илемпе...»

Екатерина Ефремова пултарулӑхӗ тӗрлӗ енлӗ пулнӑ. Иртнӗ ӗмӗрӗн 40-мӗш ҫулӗсенче вӑл Мускаврра йӑлари капӑрлӑх ӳнерӗн институтӗнче, илемлӗ керамика уйрӑмӗнче вӗреннӗ.

1948 ҫулта «Чӑвашсен квас савӑт-сапи» /«Чувашский квасник»/ диплом ӗҫӗшӗн чи лайӑх паллӑна тата премие тивӗҫнӗ. Пирӗн ентешӗмӗр хӑйӗн пултарулӑхӗпе чаплӑ ӳнерҫӗсене – диплом проекчӗн ертӳҫине В.А. Фаворские тата патшалӑх комиссийӗн председательне П.П. Кончаловские /сӑмах май, Никита Михалков режиссерӑн кукашшӗне/ – тӗлӗнтерме пултарнӑ. Екатерина Иосифовнӑна вӗсем Мускаврах юлма сӗннӗ. Чӑваш ӑрӑмҫи вара тӑван Шупашкара, хӑй юратнӑ тӗрӗ ҫӗршывне таврӑннӑ...

«Е.И.Ефремова пурри чӑвашсемшӗн пысӑк телей» – ку сӑмаха республика ертӳҫи пулнӑ С.М. Ислюков каланӑ. Чӑваш халӑх поэчӗ Петӗр Хусанкай Екатерина Иосифовнӑна ҫакӑн пек чысланӑ:

Салам та мухтав сана,
Илемлӗ чунлӑ Кӗтерин!
Тӗррӳ юлать, чунун тӗрри,
Ытти тусан кӑна.

Кунтан тивӗҫлӗрех хаклав тупайрас та ҫук. Екатерина Иосифовна ячӗ пирӗн культура историйӗнче Николай Ашмаринпа Николай Никольский, Константин Ивановпа Петӗр Хусанкай, Федор Павловпа Иоаким Максимов-Кошкинский, Моисей Спиридоновпа Анатолий Миттов пек ҫуталса тӑрать. Шел, унӑн пархатарлӑ ӗҫне, ҫӑл куҫ таппи пек пултарулӑхне тивӗҫлипе хакласа ҫитерейменха: тӗпчемелле те тӗпчемелле ӑна пирӗн, халӑха каласа памалла, ҫамрӑксемшӗн ырӑ тӗслӗх тумалла. Екатерина Ефремовӑна халалланӑ сумлӑ монографи, эрешлӗ альбом, илемлӗ повеҫ пулӗ-ши? «Паха тӗрӗн» чаплӑ ячӗ-сумӗ таврӑнӗ-ши? Йывӑр туйӑмсене сирекенӗ, чун-чӗрере шанчӑк вӑратаканӗ, тимсӗрлӗхпе сӳрӗклӗх пӑрне ватаканӗ – «Тӗрӗ ӑсти Екатерина Ефремова» ятлӑ хулӑнах мар кӗнеке. Унӑн авторӗ – Чӑваш Республикин культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, пичет ветеранӗ Валентина Алексеевна Минеева. Ҫӗнӗ кӗнеке Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн типографийӗнче кун курчӗ. Вӑл нумай сийлӗ хайлав: аса илӳ те, тӗпчев те, ҫырусен тишкерӗвӗ те пур. Автор тата унӑн геройӗ Екатерина Ефремова чылай ҫул туслӑ пулнӑ, чуна уҫса сахал мар калаҫнӑ, пӗр-пӗрне

хавхалантарма тăрăшнă. Валентина Алексеевна хăй те – ал ĕç ăсти, тĕрлĕ шайри куравсен çĕнтерӳçи, «Чăвашсен эрешлĕ пир-аварĕ /Чувашское узорное ткачество/» кĕнеке-альбомăн тата «Ĕмĕрĕн кĕске сыпăкĕсем» асаилӳ кĕнекин авторĕ. В.А. Минеевăн çĕнĕ ĕçĕ – тăван культурăна юратакан кашни вулаканшăн ытарми парне.

Алексей Трофимов, ӳнер пĕлĕвĕн докторĕ.

Геннадий Дегтяров, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ.